26-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
ОКТЯБРЬ
16
ШАМАТКУН
206(6443) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

Ĕççынни депутачӗсен райсовет исполкомӗсем тата ВКП(б) райкомӗсем тӑратнӑ тӑрӑх, уборка вӑхӑтӗнче тухӑçлӑн тата лайӑх ĕçленӗшӗн, государствӑна тырӑ парса татнӑшӑн ялхуçалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп хӑми çине çак колхозсене кӗртнӗ:

39. Куславкка районӗнчи «13 годовщина Октября» колхоз (колхоз председателӗ **Спиридонов** юлташ). Çак колхоз 257 гектар тӗштырра, кӗске срокра тата пӗр тӑкк аламасӑр вырса пӗтерне. Октябрӗн 5-мӗшӗ тӗлне кӗлтесене капана хывса тата авӑн çапса пӗтернӗ. Çӗрулмипе пахча-çимӗçсене пӗтӗмӗшпе х пухса кӗртнӗ. Государствӑна тырӑ, çӗрулми тата пахча-çимӗçсем парса татнӑ тата 1944 çулшӑн аванс шучӗпе 110 центнер тырӑ панӑ. Кӗрхи çӗртме планне 80 процент пурнӑçланӑ.

Комсомол организацийӗсен боевой задачисем

Кӑçалхи октябрӗн 29-мӗшӗнче Ленинла-Сталинла комсомол 25 çул тултарать. Совет çамрӑкӗсем, вӗсемпе пӗрле пирӗн çӗршыври мӗнпур халӑхсем большевиксен партийӗн тӗрӗс помощникӗ тата шанчӑклӑ резервӗ — комсомол 25 çул тултарнине уявлама хӗрӳллӗн хатӗрленеççӗ.

Чӗрӗк ӗмӗр! Ленинпа Сталин организациленӗ Çамрӑксен Коммунистла Союзӗ çак хушӑра ĕçпе кӗрешӳри чаплӑ çула чыслӑн утса тухрӗ. Комсомолецсем тӑван аншӗсемпе пӗрле граждан вӑрçи вӑхӑтӗнче совет çӗршывне хӳтӗлесе хӑвартӗç. Комсомолецсем тӑван аншӗсемпе пӗрле хамӑрӑн çӗршыва кая юлнӑ çӗршывран хӑватлӑ индустрилӗ, коллективлӑ ялхуçалӑхлӗ социализмлӑ çӗршыв тӑвассишӗн хастарлӑн кӗрешрӗç.

Большевиксен партийӗ ертсе пынипе, комсомол хӗрӳ ĕçпе хаяр кӗрешӳре ӳссе пычӗхрӗ. Чӗрӗк ӗмӗр хушши парти совет çамрӑкӗсене кӗрешӳре большевиксем пек паттӑр та хӑюллӑ, шиксӗр пулма, Тӑван çӗршыва хӳтӗлессишӗн пурнӑçа хӗрхенмесӗр, юлашки юн тумламӗ юлмиччен кӗрешме вӗрентрӗ. Нимӗç захватчикӗсем пирӗн çӗршыври мирлӗ пурнӑçа вӑрӑ-хурахла пăссан, Тӑван çӗршыв умне хӑрушлӑх капланса тухсан, совет çамрӑкӗсем пӗтӗм халӑхпа пӗрле Отечественнӑй аслӑ вӑрçа çӗкленчӗç. Комсомолецсем фронтра тӑван аншӗсемпе, аслӑ пиччӗшӗсемпе пӗрле ылханлӑ тӑшман çине арӑслансем пекех ыткӑнчӗç, тылра — предприятисемпе колхозсенче, халӑх хуçалӑхӗн мӗнпур отраслӗсенче тӗп вӑй пулса тӑчӗç.

Ленинла-Сталинла Комсомол хӑйӗн 25 çулхи уявне вӑрçӑ хирӗнче историре пулман аслӑ çапăçу пынӑ вӑхӑтра паллӑ тӑвать. Çак чаплӑ уява хатӗрленсе, пирӗн нумай миллионлӑ комсомол Отечественнӑй вӑрçа татах та вӑйлӑнрах хутшӑнма тӑрӑшать, çамрӑклӑхри мӗнпур вӑйпа хастарлӑха çӗнтерӳ туптана çӗре пама, кирек мӗнле йывӑр задание те пурнӑçа кӗртме Ленин—Сталин партийӗ умӗнче тупа тӑвать.

ВЛКСМ 25 çул тултарнине комсомолецсемпе çамрӑксене большевиксен партийӗ тавра татах та тачӑнрах пӗтӗçтерес лозунгпа, çамрӑксен мӗнпур вӑйӗсене нимӗç захватчикӗсене хирӗç кӗрешме, фронта пӗр вӗçӗмсӗр пулăшса тăма мобилизацилес, комсомол организацийӗсене организацилӗхпе политика тӗлӗшӗнчен малалла тӗреклетес, комсомолпа çамрӑксен йышлӑ массисем хушшинчи çыхӑнăва вӑйлатас лозунгпа уявласа ирттермелле, — çапла кӑтартса пачӗ ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗ.

Çакӑн пек задачӑсем тухса тӑчӗç Чӑваш комсомолӗ умне те. Мускав тата Ленинград хулисенчи комсомолецсем ВЛКСМ 25 çул тултарас ятпа пуçарнӑ социализмлӑ ăмӑртăва хутшӑнса, комсомолӑн республикӑри нумай организацийӗсем комсомолецсемпе союзра тӑман çамрӑксене фронта ытларах пулăшма мобилизацилерӗç. Предприятисемпе колхозсенчи, шкулсемпе учрежденисенчи комсомолецсем хӑйсен чаплă уявӗ ячӗпе тӑван çӗршыв валли производствӑллă парнесем хатӗрлеççӗ. Канашри вагонсем юсакан заводри темиçе çӗр комсомолец стахановла вахтăна тăнă. Чаплă токарь-комсомолец Иван Демьянков ĕç нормине 250—300 процент тултарма сăмах панă. Вăл ăна чыслăн пурнăçа кӗртсе пырать. Нумай пулмасть Демьянков юлташ пӗр кунхи нормăна 850 процент тултарчӗ. Комсомолецсемпе çамрăксен Челкина юлташ ертсе пыракан фронтовой бригади çак кунсенче ĕç нормине тăтăшах 300-шер процент тултарса пырать. Горшенина, Федосенко тата Власюк комсомолкăсем 3—4-шар çыншăн ĕçлеççӗ. Канашри пир-авăр фабрикинчи комсомолка-инструктор В. Степанова кашни уйăхрах вуншар çамрăка пир-авăр тӗртме вӗрентет. Август уйăхӗнче кăна вăл 20 çамрăка вӗрентсе хатӗрленӗ. Паровозсен деповӗнчи комсомолецсем — машинист помощникӗсемпе кочегарсем, электросварщиксемпе токарьсем куллен çӗнӗ çӗнтерӳ тăваççӗ. Электросварщик Сергей Жигунов ĕç нормине 250-шар процент тултарать. Гупалов юлташ — машинист помощникӗ, Кожевников юлташ кочегар пулса ĕçлекен паровоз хӗле хатӗрленсе çитнӗ çиччен депора пуринчен малтан социализмлă паспорт илнӗ. Томск чугунçулӗ çинчи машинистсен пуçарăвӗпе ĕçлесе, вӗсем паровоза хăйсен вăйӗпех, государство укçине ытлашши расходламасăр, юсаса тăраççӗ. Н-ски заводри пултарулла работницăсене — Марусяпа Лиза Филипповăсене республикăри комсомолецсем лайăх пӗлеççӗ. Вӗсен фронтовой бригадине ВЛКСМ Обкомӗ хăйӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ ялавне панă.

Колхоз çамрăкӗсем те çак историллӗ кунсенче мухтава тивĕç ĕçлеççӗ. Республикăри чылай колхозсенче авăн çапма, государствăна тырă пама комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем тунă, вӗсем ĕçре паха тӗслӗхсем кăтартаççӗ. Сталин юлташа чи малтан рапорт пама тивĕçлӗх илессишӗн пыракан социализмлă ăмăртура мала тухнă Вăрнар районӗнчи комсомолецсем çӗршыв умӗнчи обязательствăсене кăтартуллăн пурнăçласа пыраççӗ. «Победа» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем «БДО» молотилкăпа пӗр сменăра 180 центнер тырă çапнă. Красноармейски районри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем, сентябрь уйăхӗнче виçӗ хутчен воскресник ирттерсе, хатӗрлев пунктне 4.145 центнер тырă леçсе панă. Сӗнтӗр районӗнчи «Хӗрлӗ паттăр» колхозри çамрăксем Хӗрлӗ Çар воинӗсем валли ăшă тумтир хатӗрлес ĕçре паха тӗслӗх кăтартрӗç. Вӗсем каçсенче пӗрле пухăнса ĕçлесе 35 мăшăр çăм алсиш, 35 мăшăр носки çыхса хатӗрлерӗç. Чкаловски районри комсомолецсем колхозлă ялсемпе шкулсенче кӗркунне çимӗç йывăççисем лартса хунавлантарас ĕçе пуçарчӗç. Пӗр сăмахпа каласан, республикăри кашни çамрăках комсомол уявӗ ячӗпе парне хатӗрлеме тăрăшать.

Республикăра ялхуçалăх ĕçӗсене вĕçлемелли фронтовой уйăхлăх пырать. Анчах комсомолăн ялсенчи чылай организацийӗсем çак уйăхлăха тивĕçлипе хутшăнаймарĕç-ха. Ялти комсомолецсемпе çамрăксен колхозсене хăвăртрах авăн çапса пӗтерме, государство умӗнчи парăмсене татма, кӗрхи çӗртме планне пурнăçа кӗртме, выльăх-чӗрлӗх фермисене хӗле хатӗрлесе çитерме пулăшмалла. Вӗсен хальхи вăхăтра çак ĕçсенчен кирлӗрехни тата ответлăраххи урăх çук та. Авăна кунӗн-çӗрӗн çапмалла, государствăна тырă парас ĕçе вăйлатмалла, молотилкăсене пӗр чарăнмасăр ĕçлеттермелле.

Ялти комсомолецсен ытти ĕçсем те темӗн чухлех. Хӗл çывхарнă май, вӗсен ялхуçалăх машинисене уйхиртен илсе кӗрсе пӗр çӗре пухса тирпейлес, вулав çурчӗсемпе колхозсенчи клубсене хӗллехи вăхăтра йӗркеллӗ ĕçлемелле тăвас тӗлӗшпе хӗрӳллӗн ĕçлемелле.

Çак задачăсене ăнăçлăн пурнăçлас тесен, комсомол организацийӗсен хăйсен ĕçне лайăхлатмалла. Çамрăксен Коммунистла Союзӗн речӗсене пӗр вӗçӗмсӗр тӗреклетсе пымалла. Комсомол организацийӗсен ĕçӗнчи нысăк çитменлӗх вăл — çамрăксене политикăллă воспитани парас ĕçе çителӗксӗр туса пыни. Çавна пула комсомола илес ĕç те нумай çӗрте сӳрӗк пулса пырать.

Парти организацийӗсен çак çитменлӗхсене пӗтерме комсомол организацийӗсене большевикла пулăшса пымалла.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

I, II тата III-мӗш степенлӗ Богдан Хмельницкий орденӗ тăвасси çинчен

Совет çӗршывне нимӗç захватчикӗсенчен ирӗке кăларассишӗн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă Хӗрлӗ Çарăн тата Тинӗс-Çар флочӗн командирӗсемпе боецӗсене, партизан отрячӗсен руководителӗсемпе партизансене наградăлас шутпа СССР Верховный Совет Президиумӗ çапла йышăнать:

1. I, II тата III-мӗш степенлӗ Богдан Хмельницкий орденӗ тăвас.

2. I, II. тата III-мӗш степенлӗ Богдан Хмельницкий орденӗн статутне тата çав орден мӗнле пулмалли çинчен çырнине çирӗплетес.

3. III-мӗш степенлӗ Богдан Хмельницкий орденне СССР Верховный Совет Президиумӗ ячӗпе парса наградăлама фронтсен тата флотсен командующийӗсене ирӗк парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1943 çулхи октябрӗн 10-мӗшӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Переяслав хулине Переяслав-Хмельницкий хули тесе ят парасси çинчен

Украина халăхӗн питӗ чаплă ывăлӗн, Украинăн государственнăй деятелӗпе полководецӗ пулнă Богдан Хмельницкин ятне ӗмӗр-ӗмӗрех асра тытмалла тăвас тесе, Переяслав хулине малашне Переяслав-Хмельницкий хули тесе ят парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1943 çулхи октябрӗн 12-мӗшӗ.

ФЗО шкулӗсемпе чугун çул училищисене вӗренме илес тӗлӗшпе призыв пуçланчӗ

ССР Союзӗн Совнаркомӗ йышăннă тăрăх, октябрӗн 10-мӗшӗнче хулари тата ялсенчи çамрăксене ФЗО шкулӗсене, ремесленнăй тата чугун çул училищисене вӗренме илес тӗлӗшпе призыв пуçланчӗ. Призыв ноябрӗн 10-мӗшӗччен пырать. Вӗренӳ çулӗ ноябрӗн 15-мӗшӗнче пуçланать.

Сталин юлташ пуçарнипе организациленӗ ФЗО шкулӗсем, ремесленнăй тата чугун çул училищисем иртнӗ виçӗ çул хушшинче промышленноçпа транспорта квалификациллӗ рабочисем нумай пачӗç. ФЗО шкулӗсемпе училищисенчен вӗренсе тухнă çамрăксем халӗ миллион сурра яхăн çын тӗрлӗ профессисемпе фабрикăсенче, заводсенче, чугун çулсем çинче, строительствăсенче ĕçлеççӗ. Вӗсенчен нумайӗшӗсем пысăк ĕç тухăçлăхӗ кăтартаççӗ.

Шупашкарти ФЗО шкулӗнче вӗреннӗ Шестипалов, Кабанов, Хрисанова юлташсем хăйсен пултаруллăхне кӗске вăхăтрах кăтартнă. Халӗ вӗсем нормăна нумай ирттерсе тултараççӗ. Çав шкултан вӗренсе тухнă çамрăк хӗрача Томаровская юлташ мастер пулса ĕçлет. Çавăн пекех Улатăрти чугун çул училищинчен вӗренсе тухнă çамрăксем Авдейчик, Дохленко юлташсем мастер пулса, Родионов, Михайловский, Малышев юлташсем паровоз çинче машинист помощникӗсем пулса ĕçлеççӗ. Хӗрачасем те арçынсенчен юлмаççӗ. Елӗкрех «арçын çеç ĕçлеме пултарать» текен ĕçсене халӗ нумай çӗрте хӗрачасем тăваççӗ. Çапла, сăмахран, Куславккари ФЗО шкулӗнче вӗреннӗ Алмазова юлташ слесарь пулса ĕçлет, нормăна ирттерсе тултарать. Канашри чугун çул училищинче вӗреннӗ Евдокимова, Хакимова юлташсем халӗ электромонтерсен группинче вӗренеççӗ. Вӗсем вӗреннӗ вăхăтрах хăйсен заданине 150-шар процент таран тултараççӗ. Кун пек тӗслӗхсем сахал мар илсе кăтартма пулать. вӗсем кашни предприятирех пур.

Хальхи вăхăтра пыракан призывра республикăри 9 ФЗО шкулне тата 2 чугун çул училищине вӗренме илеççӗ. ФЗО шкулӗсем Шупашкарта, Канашра, Улатăрта, Куславккара, Çӗмӗрлере тата Сӗнтӗрвăрринче пур. Вӗсенче çакăн пек специальноçсем илме пулать: токарь, слесарь, столяр, плотник, автоматчик, тимӗрç, формовщик. Чугун çул училищисем Улатăрта, Канашра пур. Вӗсенче слесарь-вагонниксем, машинист помощникӗсем, электросварщиксем, слесарь-автоматчиксем, котельщиксем пулма вӗрентеççӗ.

ФЗО шкулӗсенче вӗренме 15—17 çула çитнӗ арçын ачасене, 16—18 çула çитнӗ хӗрачасене илеççӗ. Чугун çул училищисене 14—15 çула çитнӗ арçын ачасене тата 15—16 çула çитнӗ хӗрачасене йышăнаççӗ.

Партипе правительство ФЗО шкулӗсемпе училищӗсенче вӗренекен çамрăксене вӗренме тата пурăнма лайăх условисем туса парассишӗн тимлӗн тăрăшаççӗ. Шкулсемпе училищӗсенче вӗренекен çамрăксене укçасăрах тумлантараççӗ, куна виçӗ хутчен вӗри апат çитереççӗ. Вӗренекенсем валли лайăх общежитисем тунă.

Çамрăксене ФЗО шкулӗсемпе училищӗсене вӗренме илес тӗлӗшпе призыв ирттерме горсовет тата райсовет исполкомӗсен председателӗсене хушнă. Вӗсен призыв комиссисене ертсе пымалла. Призыв ирттерес ĕçӗпе комсомол организацийӗсем умӗнче пысăк ĕçсем тăраççӗ. Вӗсен çамрăксене государствăн ĕç резервӗсен пӗлтерӗшӗ çинчен, шкулсенче тата училищӗсенче вӗренме мӗнле условисем пулни çинчен тӗплӗн ăнлантарса памалла. Кашни çамрăк хăй шкула е училищӗне вӗренме кӗни çӗршывшăн хисеплӗ ĕç пулса тăнине ăнланса илтӗр.

Призыв ирттернӗ чухне шкулсемпе училищӗсене таса сывлăхлă çамрăксене илесси çине, вӗренме илнӗ çамрăксене вырăна вăхăтра, йӗркеллӗ ăсатасси çине тимлӗн çаврăнса пăхмалла.

Шкулсемпе училищӗсенче çамрăксене йышăнма хатӗрленес тӗлӗшпе те çине тăрса ĕçлени кирлӗ. Шкул çурчӗсене, общежитисене, столовăйсене, мастерскойсене юсаса хатӗрлемелле. Предприяти руководителӗсен тата партипе профсоюз организацийӗсен çав ĕçсене тăвас енӗпе ФЗО шкулӗсене пулăшмалла.

ФЗО шкулӗсемпе ремесленнăй тата чугун çул училищисене вӗренме илес тӗлӗшпе призыв пуçланнăранпа пиллӗк кун иртрӗ ĕнтӗ. Анчах та чылай районсем çак ĕçе кирлӗ пек организацилемен-ха. Кун пек сӳреклӗхе чăтма çук. Районсенчи партипе совет организацийӗсен халех çине тăрса ĕçлеме тытăнас пулать. ФЗО шкулӗсемпе ремесленнăй тата чугун çул училищисене вӗренме илесси государствăн кирлӗ те пысăк ĕçӗ пулса тăрать. Çав ĕçе вăхăтра та ăнăçлăн пурнăçа кӗртмелле.

Н. ФОМИН,
Чăваш АССР Совнаркомӗ çумӗнчи ĕç резервӗсен управлени начальникӗн заместителӗ.

Фронтовиксен ачисемшӗн тăрăшаççӗ

Çӗрпӳ районӗнчи Лĕпсер ялсоветӗнчи колхозниксен пуçарăвне республикăри колхозсем, предприятисемпе учрежденисем кăмăллăн йышăнса иличӗç. ВЛКСМ райкомӗсемпе районсенчи пайӗсем çак пархатарлă ĕçе колхозниксем хушшинче анлăн сарма пулăшрӗç. Хӗрлӗ Чутай районӗнче фронтовиксен ачисем валли 8.593 тенкӗ укçа, 227 килограмм çăм, 30 тир, 3 мăшăр çăматă, 3 пальто, 31 мăшăр алса, Вăрнар районӗнче 23.000 тенкӗ укçа, 35 килограмм çăм, 31 тир, 4 мăшăр çăматă, 15 мăшăр атă-пушмак, 17 пальто, 50 мăшăр алса пухнă. Çӗрпӳ, Комсомольски районсенче те ăшă япаласем чылай парса пулăшнă. Çакă вăл всевобуч заксне пурнăçлама пулăшмалли майсенчен пӗри пулать. Çавăнпа Хӗрлӗ Чутай, Çӗрпӳ тата ытти районсем те шкул çулне çитнӗ ачасене пурне те вӗренӳве явăçтарма пултарчӗç.

ЧĂВАШ АÇСР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Чăваш АССР Верховный Совечӗн улттăмӗш сессине пухасси çинчен

Чăваш АССР Верховный Совечӗн улттăмӗш сессине 1943 çулхи ноябрӗн 1-мӗшӗнче Шупашкар хулинче пухас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарӗн ĕçӗсене тăваканӗ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 çулхи сентябрӗн 30-мӗшӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ОКТЯБРӖН 14-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Кăнтăр-Хӗвеланăç фронтӗнчи çарсем, ăнăçлăн наступлени туса пырса, тăшман хаяррăн хирӗç тăнине çӗмӗрсе тăкнă та октябрӗн 14-мӗшӗнче, штурм туса, Украинăн область центрне — ЗАПОРОЖЬЕ хулине тытса илнӗ. Çапла ĕнтӗ, нимӗçсен ДНЕПР шывӗн сулахай енчи Запорожье плацдармне пӗтерсе тăкнă.

МЕЛИТОПОЛЬ енче пирӗн çарсем МЕЛИТОПОЛЬ хулин урамӗсенче вăйлăн çапăçнă. Пирӗн боецсем нимӗçсене çынсем тӗлӗшпе те, техника енчен те йывăр çухатусем кӳреççӗ. Мелитопольпе Крымпа çыхăнтарса тăракан чугун çула пирӗн çарсем икӗ тӗлте татнă. Мелитопольпе Крымран уйăрса пăрахнă.

ДНЕПР шывӗн вăтам тăрăхӗнче, Днепрăн сылтăм енче, пирӗн çарсем КИЕВРАН çурçӗртерехри тата кăнтăртарахри плацдармсене аслăлатасшăн ăнăçлăн çапăçнă, хăйсен позицийӗсене чылай лайăхлатнă. Çав çапăçусенче пирӗн çарсем нимӗçсен пур контратакисене те сирсе янă, тăшмана пысăк çухатусем кӳнӗ.

ГОМЕЛЬ хулинчен кăнтăртарахри тата çурçӗртерехри районра пирӗн çарсем СОЖ шывӗн сылтăм енчи плацдармсене аслăлатасшăн малтанхи районсенчех çапăçнă.

Фронтăн ытти участокӗсенче вăйлă разведка тунă тата тăшмана хирӗç артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Октябрӗн 13-мӗшӗнче пирӗн çарсем мӗнпур фронтсенче нимӗçсен 96 танкне персе çӗмӗрнӗ е пӗтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 97 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Кăнтăр-Хӗвеланăç фронтӗнчи çарсем, тăшман хаяррăн хирӗç тăнине çӗмӗрсе тăкса, паян Запорожье хулине штурмласа тытса илнӗ. Пӗр соединени чаçӗсем хăюллă та çав тери хăвăрт маневр туса малалла куçнă та нимӗçсен оборонине йӗркерен кăларнă. Тепӗр участокра пирӗн гвардеецсем, сасартăк атакăласа, тăшман оборонин темиçе тӗввине йышăнса илнӗ. Çав çапăçусенче нимӗç пехотине пӗр полкран кая мар пӗтерсе тăкнă. Вара ирхине ирех совет танкисчӗсем Запорожье хӗррине вăркăнса кӗрсе кайнă та чугун çул тӗввине тытса илнӗ. Тăшман хирӗç тăнине çӗмӗрсе тăкса, пирӗн çарсем Украинăн пысăк промышленноçлă область центрне—Запорожье хулине штурмласа тытса илнӗ. Нимӗçсен Днепр шывӗн аялти тăрăхӗнчи тӗреклетнӗ питӗ паха пункчӗсенчен пӗрне пӗтерсе тăкнă. Тăшмана çынсем тӗлӗшпе те, техника енчен те йывăр çухатусем кӳнӗ. Запорожье таврашӗнче тата хула урамӗсенче нимӗçсем темӗн чухлӗ çар техникипе çар пурлăхӗ пăрахса хăварнă. Нумай ыраран аркатса тăкнă. Обозсене, складсене тата автомашинăсене нумай пӗтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнӗ.

* * *

Мелитополь хулинче çаплах урамсенче вăйлăн çапăçнă. Пирӗн çарсем, штурмовой отрядсем çине пайланса, нимӗçсен фашистла захватчикӗсенчен çурт хыççăн çурт, урам хыççăн урам тасатса пыраççӗ. Пирӗн боецсем тăшмана çав тери пысăк çухатусем кӳреççӗ. Хулана тем пулсан та хăй аллинче тытса хăварма хăтланса, нимӗçсем вӗçӗ-хӗррисӗр резервсем куçарса пыраççӗ те çавăнтах контратакăсене кӗртсе яраççӗ. Тулли мар даннăйсем тăрăх, кун каçиччен 2.000 нимӗç салтакӗпе офицерне ытла вӗлерсе пӗтернӗ, 26 танк, хăй тӗллӗн çӳрекен 6 тупă тата 40 хир туппи пӗтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнӗ. Тыткăна илнисем пур. Пирӗн çарсем Мелитопольпе Крым хушшинчи чугун çула икӗ тӗлте татнă.

* * *

Киевран çурçӗртерехре тата кăнтăртарахра, Днепр шывӗн сылтăм енче, пирӗн çарсем, ăнăçлăн çапăçса, хăйсен позицийӗсене чылай лайăхлатнă. Тăшман, резервсем куçарса пырса тата контратакăсем туса, хăй ĕнер çухатнă тӗреклетнӗ ялсене каялла тытса илме хăтланнă. Икӗ енӗ те питӗ хаяррăн çапăçаççӗ. Пирӗн çарсем нимӗçсен контратакисене пурне те сирсе янă. Çав çапăçусенче тăшманăн 3.000 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тăкнă, нимӗçсен 35 танкне, хăй тӗллӗн çӳрекен 8 туппине тата 37 хир туппине персе çӗмӗрнӗ е çунтарса янă. Киев районӗнчен çурçӗртерехри районра пирӗн танкистсем нимӗçсен малтанхи речӗсем витӗр тухса шалалла кӗрсе кайнă та тăшманăн виçӗ дивизи тылӗсене аркатса тăкнă. Обозсене, складсене тата автомашинăсене нумай пӗтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнӗ.

* * *

Гомельтен кăнтăртарахра тата çурçӗртерехре пирӗн çарсем Сож шывӗн хӗвеланăç енчи плацдармсене аслăлатасшăн çапăçнă. Пирӗн чаçсене Сож шывӗн сылтăм енчен кăваласа ярасшăн пулса, нимӗçсем темиçе хутчен контратакăсем тунă. Çав контратакăсене пирӗн чаçсем тăшмана пысăк çухатусем кӳрсе сирсе янă. Нимӗç салтакӗсемпе офицерӗсене 1.500 çынна çити вӗлерсе пӗтернӗ. 14 тупă пӗтерсе тăкнă, вӗсенчен иккӗшӗ— хăй тӗллӗн çӳрекен «Фердинанд» йышшисем.

* * *

Балтика флочӗн торпеда пăрахакан самолечӗсем Балтика тинӗсӗнче нимӗçсен 4.000 тонна таякан суднине шыва путарнă.

* * *

Литовец партизанӗсен отрячӗ нимӗçсен партизансене тапăнма хатӗрленнӗ çар чаçӗн штабне хăюллăн тапăннă. Совет патриочӗсем 20 гитлеровеца ытла вӗлернӗ. Штабри документсене тытса илнӗ. Литовец партизанӗсен «За родину» ятлă отрячӗ октябрӗн 2-мӗшӗнче шоссе çулӗпе пыракан тăшман колоннине пенӗ. Нимӗçсен 3 офицерне тата 16 салтакне вӗлернӗ. Октябрӗн 7-мӗшӗнче литовец партизанӗсем телеграфпа телефон çыхăнăвӗн линине 4 километр тăршшӗ пӗтерсе тăкнă тата нимӗçсен фронталла пыракан çар эшелонне ӳпӗнтерсе янă.

* * *

Нимӗçсен тыткăна лекнӗ обер-лейтенанчӗ Вольфганг Рихтер çапла каласа панă: «Çак çулхи пӗтӗм август уйăхӗпех эпӗ Кельн хулинче 211-мӗш запаснăй батальонра тăтăм. Сентябрь уйăхӗн пуçламӗшӗнче сывалса пыракан салтаксен маршевăй ротипе пӗрле эпӗ те Хӗвелтухăç фронтне çитрӗм. Кунта пире васкаса хӗçпăшал пачӗç те çапăçăва кӗртсе ячӗç, çул çинчен кăшт та пулин канма та памарӗç. Эпӗ фронтра темиçе хут та пулнă, нумай çапăçусенче пулнă, виçӗ хут аманнă, мана тимӗр хӗресӗн пӗрремӗш класс орденӗпе наградăланă. Çак çура, аманнă хыççăн эпӗ темиçе уйăх хушши Германире пурăнтăм. Тылри халăхăн шухăш-кăмăлӗсем питӗ начар. Пурте çапла шухăшлаççӗ: Германия нумайччен чăтса тăма пултараймас çук, теççӗ. Халăх шутланă тăрăх, Гиммлера шалти ĕçсен министрӗ тунин çӗршывра осаднăй положени тунипе пӗрех. Эпӗ çапла шутлатăп: эпир ку вăрçăра аяла пултăмăр ĕнтӗ, çавăнпа та эпӗ тыткăна парăнма йышăнтăм. Манпа пӗрле пулнă салтаксем ман шухăшша ырларӗç те, эпир пурте алăри хĕçпăшала пăрахса сире парăнтăмăр».

Çимӗç йывăççисем лартаççӗ

ИШЛЕЙ, октябрӗн 13-мӗшӗ. (Телефонпа). Шурчари тулли мар вăтам шкулти (директорӗ Ефименко юлташ) учительсемпе вӗренекенсем, чкаловецсен пуçарăвне йышăнса, çимӗç йывăççисем лартма тытăнчӗç. Пӗтӗмпе 1000 тӗп улма йывăççи, 500 тӗп çырла йывăççи лартмалăх шăтăксем чавса çитернӗ. Халӗ çимӗç йывăççисене лартаççӗ.

А. ТОЛСТОВ

ЯЛХУÇАЛĂХ ĔÇĔСЕНЕ ВĔÇЛЕМЕЛЛИ ФРОНТОВОЙ УЙĂХЛĂХ

Ӳкерчĕк çинче: Ишлей районĕнчи Водопьянов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ — Отечественнăй аслă вăрçă инвалидĕ **Т. О. Осипов** юлташ. Вăл ертсе пыракан колхоз кăçал уйхир ĕçĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пынă вăхăтра 40 ĕне валли çĕнĕ вите, пăру-пӳтексем валли тата фермăра ĕçлекенсем валли икĕ çурт туса лартрĕ.

Н. ДАНИЛОВ фото-ӳкерчĕкĕ.

Лашасемпе туллин усă курас пулать

ЭЛЕК. (Хамăр корр.). Юлашки эрнере чылай колхозсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе хăвăртлатрĕç. Синерти Жданов ячĕпе тăракан колхоз октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлнех çĕртме тумалли плана 101 процент тултарнă. Кунта çĕртме сухине 18—20 сантиметр тăрăнăш сухаланă. Уйрăм сухаçăсем: А. Герасимов, Л. Золотов, А. Терентьев колхозниксем, икшер касăллă плугпа ĕçлесе нормăна кулленех 130 процент таран тултарса пынă.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕç Лупашкари «Трудовик», Писенерти Чапаев ячĕпе тăракан, «Канаш», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенче те хăвăрт пулса пырать. Октябрĕн 10-мĕшне вĕсем кашнинех çĕртме тумалли плана 60 процентран кая мар тултарнă. Кунта лашасемпе туллин усă кураççĕ. Писенерти Чапаев ячĕпе тăракан колхозра çĕртме тума ятарласах 7 лаша уйăрнă, вĕсемпе ир пуçласа каçчĕнех суха тăваççĕ. Çавăнпа колхоз çĕртме тумалли графика ытлашшипех пурнăçласа пырать. Октябрĕн 10-мĕшне вăл 72 гектар сухаласа плана 85,7 процент тултарчĕ.

Уйрăм колхозсем питĕ юлса пыраççĕ. Шундряшри Молотов ячĕпе тăракан колхозăн çĕртме тунă çĕрте 6—7 лашапа ĕçлеме май пур, халĕ 4 лашапа çеç сухалаççĕ. Вĕсем те нормăна тултармаççĕ. Мĕншĕн тесен суха тума ир тухмаççĕ, хĕвел аничченех кĕреççĕ. Çапла ĕçленĕ пирки колхоз кĕрхи çĕртме тумалли плана 14,3 процент çеç тултарнă.

Татмăш ялсоветĕнчи колхозсенче те çĕртме тума уйăрнă лашасемпе 50—60 процент çеç усă кураççĕ. Татмăшри Молотов ячĕпе тăракан колхоз 156 гектар сухалас вырăнне пĕтĕмпе те пĕр гектар çеç сухаланă. Анчах ялсовет председателĕ Иванова юлташ нимĕнле мера та йышăнмасть

Х. ЛИСИН.

Хĕрӳ ĕçре

КАЛИНИНО. Вăрçă пуçланнăранпа пирĕн районра 762 çамрăк комсомол ретне кĕнĕ. Вĕсем пурте колхозсенче, учреждениесенче тата ытти çĕрте активлăн та хастарлăн ĕçлеççĕ.

Çамрăк вăй кулленех ӳссе пырать. Кăçалхи уборка вăхăтĕнче кăна районра 50 çамрăка комсомол ретне илнĕ. Аçăмçырмари пуçламĕш организацире 6 çамрăк, Услапари пуçламĕш организацире 21 çамрăк, Кăмпалти пуçламĕш организацире 5 çамрăк комсомола кĕнĕ.

Районра 4 комсомолец — колхоз председателĕсем, 11 комсомолец—колхоз счетоводĕсем, 27 комсомолец—бригадирсем, 80 ытла комсомолец—учительсем, 96 комсомолец—служащисем, 4 комсомолец—агрономсем т. ыт. пулса ĕçлеççĕ. Комсомолецсем кăçал колхозсенче ĕçлесе 80 пине яхăн ĕçкунĕ тунă. Уйрăм комсомолецсенчен И. Иванов (Хăмăш шкулĕн учителĕ) 200 ĕçкунĕ, комсомолка М. Илларионова («Броневик» колхозра) 245 ĕçкунĕ, М. Лошкина 250 ĕçкунĕ, комсомолец О. Блинов 400 ĕçкунĕ тунă.

Вăрçă пуçланнăранпа районра 58 комсомолец ВКП(б) ретне кĕнĕ. Геройла Сталинграда хӳтĕлесе çапăçакан çине тăратма 14 комсомолец, фабрикăсемпе заводсене ĕçлеме 29 комсомолец кайнă.

Пур ĕçе те вăхăтра ĕлкĕртеççĕ

ÇĔРПУ. «Çамрăк вăй» колхозра çак кунсенче ĕç уйрăмах хĕрӳллĕн пырать. Колхозниксем ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлес тесе ырми-канми ĕçлеççĕ. Фронтовой уйăхлăха хутшăннăранпа ĕç тухăçлăхĕ татах та ӳсрĕ, çынсем дисциплинăна çирĕп тытаççĕ. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне колхозăн виçĕ бригади çавăн çапса пĕтерчĕ. Паян акă ытти бригадăсем те авăн ĕçне вĕçлерĕç. Вăрлăхлăх клевера та çилĕнчех шĕкĕлчесе хунă, кантăрсене шыва хутнă.

Хĕле хатĕрленнĕ май, выльăх-чĕрлĕх витисене юсаса ăшă тытмалла тăватпăр. Колхоз кăçал пĕр çĕнĕ вите туса лартрĕ. Вăл выльăхсене йышăнма пур енчен те хатĕр. Ытти кивĕрех витесене пăсса юсарĕç. Фермăсен заведующийĕ Синяков юлташ çак ĕçсене хăй ертсе пычĕ. Колхоз выльăх-чĕрлĕхе хĕлле лайăх пăхса усрама фермăсене тĕплĕн хатĕрлесе çитерчĕ.

И. ЯКОВЛЕВ.

Вăрлăх фончĕсене пур çĕрте те лайăх тырпул хывмалла

КАЛИНИНО. Услапари «Броневик», Айкăшри Киров ячĕпе тăракан колхозсем вăрлăх участокĕсенчи пĕтĕм тырра çапса тасатрĕç те вăрлăхлăх уйăрса хучĕç. Çавнашкалах, вăрлăх фончĕсене чи лайăх тырăсем хывса хăварассишĕн тата вĕсене лайăх пăхса усрассишĕн Шуркассинчи «Социализм», Туçи Мăратри «Клевер» колхозсенче те тăрăшаççĕ. Вăрлăх фончĕсене таса та типĕ тырă хываççĕ, вĕсене сортлама тытăннă та ĕнте.

Анчах та районри хăшпĕр колхозсенче вăрлăх участокĕсенчи тырра ытти тырăсемпе хутăштарса янă, ăна хуçалăхра салатса янине те курма пулать. Сăмахран, Кадеркино ялсоветне кĕрекен колхозсенче çавăн пек тунă. Эншикри «Пучах», Шнакассинчи «Броневик», Мачамăшри «Первомайский» колхозсенче вăрлăх фондне таса мар тырă хывнă.

Б. ШОРНИКОВ.

Оборона гектарĕсен тыррине государствăна парĕç

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Тĕрер ялсоветĕнчи колхозсем çуркунне планран ытлатерсе оборона гектарĕсем акса хăварнăччĕ, пĕтĕмпе 14 гектар акнăччĕ. Колхозниксем ăна уйрăмах вырса пухса, тирпейлĕн çапрĕç. Кашни гектартан вăтам шутпа 10-шар центнер тырă тухрĕ.

Октябрĕн 14-мĕшĕнче ялсоветĕнчи «Пчелкино», «Правда», «Красная Чувашия» колхозсем оборона гектарĕсем çинчен пухса илнĕ тырра йăлтах (84 центнер) хатĕрлев пунктне леçрĕç.

К. МИХАЙЛОВ-РУСЬ

Ĕç хăвăртлăхне чакармалла мар

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, октябрĕн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Фронтовой уйăхлăх пуçланнăранпа районри 18 колхоз авăн çапса пĕтерчĕ. Хăшпĕр колхозсем государствăна тырă памалли плана ăнăçлăн тултарса пыраççĕ. Анчах та пĕтĕм районĕпе илсен, ĕç хăвăртлăхĕ ӳсни курăнмасть.

Фронтовой уйăхлăх пуçланас умĕн, сентябрĕн 20-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче, районри колхозсем государствăна 250 тонна тырă панă. Сентябрĕн 25-мĕшĕпе 30-мĕшĕ хушшинче вара 190 тонна, октябрĕн 1-мĕшпе 5-мĕшĕ хушшинче 139 тонна кăна панă. Мĕншĕн чакнă-ха ĕç хăвăртлăхĕ? Юлашки вăхăтра чылай колхозсенче транспорт бригадисене салатса янă. Çавна пула вара государствăна тырă турттарасси юлса пырать. Сăмахран, «Венера» колхозăн (председателĕ Иванов) ĕçĕсене пăхса тухар. Унта государствăна тырă памалли графика пурнăçа кĕртме турттăм вăйĕ те, çапнă тырă та çителĕклĕ пулнă. Анчах колхоз председателĕ ответлăха çухатнине пула, октябрĕн 5-мĕшпе 10-мĕшĕ хушшинче государствăна пурĕ те 16 центнер кăна тырă панă. «Красная Горка» колхоз председателĕ Васильев тырă парас ĕçе хăй чăрмантарса пырать. Хĕрӳллĕ ĕç пынă вăхăтра вăл хăйĕн килти ĕçĕпе Етĕрне хулине тухса кайнă та унта темиçе кун пурăннă. Çав вăхăтра государствăна тырă парас ĕç питех те начар пынă. Халĕ вара Васильев: «Пирĕн лашасем кӳлмелли хатĕрсем çук», тесе лартать. Унта авăн çапассине те йĕркеллĕ организацилемен. Октябрĕн 12-мĕшпе 13-мĕшĕ хушшинче колхоз итемĕ çинче пĕр çын та пулман.

Халĕ районри чылай колхозсенче авăн çапас ĕç вĕçленнĕ хыççăн хăшпĕр молотилкăсем пушанчĕç. Сăмахран, Ильич ячĕпе тăракан колхоз 6 лаша вăйлă молотилкăна — «Четай» колхоза, «Пятилетка» колхоз—хăйĕн электричествăпа ĕçлекен молотилкине кӳршĕри колхоза пама пултарать. Анчах та çавна тумаççĕ.

Фронтовой уйăхлăх вĕçленсе пырать. Уйăхлăх пĕтиччен ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлесе çитерме районăн пур майсем те çителĕклĕ. Партипе совет, комсомол организацийĕсен, çĕрĕç работникĕсемпе колхоз председателĕсен пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

С. ШАДИН.

Хĕрлĕ Çар валли çĕрулми типĕтеççĕ

СĔНТĔР. Шомик ялсоветĕнчи «Колос» колхоз членĕсем фронтовой уйăхлăхра тимлĕн ĕçлеççĕ. Çак иртнĕ кунсенче вĕсем 35 гектар çĕрулми кăларса пуçтарчĕç, ăна государствăна парса татрĕç.

Кăçал колхозăн çĕрулми тухăçлă пулнă. Кашни гектартан 150 центнер ытла кăларса пуçтарнă. А. Серова, В. Краснова, О. Ельникова тата ытти хăшпĕр колхозницăсем çĕрулми кăларнă çĕрте пуринчен те тимлĕрех ĕçлерĕç. Вĕсем кунне 0,12-шер гектар çĕрулми кăларнă.

Государствăна парса татнă хыççăн, колхоз çĕрулмине килес çул лартма вăрлăхлăх уйăрса хучĕ, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли типĕтме чи паха çĕрулми уйăрчĕ. Унтан колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх аванс шучĕпе çĕрулми виçшер килограмм валеçрĕç.

Хĕрлĕ Çар валли çĕрулми тата пахча-çимĕçсем типĕтме колхоз правленийĕ звено организациленĕ. Звенона ĕçлеме пур майсем те туса панă. Çĕрулми турамалли çĕçĕсем, çумалли каткасем, вĕрилентермелли хурансем тата типĕтмелли кăмака,—пурте юсавлă та лайăх. Кăмака вĕрилĕхне сăнаса тăма термометрсем те пур.

Халĕ звено 5 центнер çĕрулми типĕтсе панă та ĕнтĕ. Çĕрулми типĕтмелли задание звено Октябрь уявĕ тĕлне пурнăçлама тăрăшать.

А. СОЛОВЬЕВ.

Ӳкерчĕк çинче: Канашри «Швейник» артельти çĕлĕк-картуссем çĕлекен мастер стахановец С. Абарбанель юлташ. Ĕç нормине 200—210 процент тултарать.

Ачасене пулăшмалли фонд валли

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, иртнĕ вырсарникун республикăра ачасене пулăшмалли фонд тумалăх комсомолецсемпе çамрăксен тата пионерсемпе шкул ачисен воскресникĕ пулса иртрĕ. Воскресник чылай çĕрте ăнăçлăн иртни çинчен пĕлтереççĕ.

Чкаловски районра воскреснике пурĕ 3.430 çамрăк хутшăннă. Вĕсенчен комсомолецсем—302 çын, пионерсемпе шкул ачисем—593 çын. Вĕсем 4.038 ĕçкунĕ тунă. Çав ĕçкунĕсем çине тивекен тырра, пахча-çимĕçе пĕтĕмĕшпех ачасене пулăшмалли фонда параççĕ. Комсомолăн Киров ячĕпе тăракан колхозри организацийĕ воскреснике 230 çынна хутшăнтарнă, вĕсем 320 ĕçкунĕ тунă. Ачасене пулăшмалли фонда колхоз аванс шучĕпе çав кунах 620 килограмм тырă хывнă. Çавăн пекех Сталин ячĕпе тăракан колхозри 359 çамрăк 386 ĕçкунĕ тунă. Колхоз çав ĕçкунĕсемшĕн ачасене пулăшмалли фонда аванс шучĕпе 42 пăт ытла тырă хывнă.

Вăрмар районĕнче воскреснике 1924 çамрăк хутшăннă. Вĕсем ачасене пулăшмалли фонд валли 2.271 килограмм тырă ĕçлесе илнĕ. «Маяк» колхозри комсомолецсем 170 çамрăка авăн çапнă çĕре мобилизациленĕ. Вĕсем 300 ĕçкунĕ тунă, ĕçкунĕсем çине тивекен тырра пĕтĕмĕшпех фронтовиксен ачисене пулăшма параççĕ.

Хĕрлĕ Чутай районĕнче фронтовиксен ачисем валли ăшă тумтирсем, апат-çимĕçсем чылай пухнă. Çапла вара, октябрĕн 10-мĕшĕнче кăна 30 килограмм çăм, 17 кĕпе, хĕрачасем валли 6 кĕпе, 70 пăт ытла çĕрулми, ыраш тата çăмартасем пухнă. Канаш районĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем те ачасене пулăшмалли фонд валли 231 мăшăр алшиш, 263 мăшăр носки, 35 çĕлĕк, ăшă тумтирсем хатĕрлеме 106 тир тата апат-çимĕç продукчĕсем пухнă. Ишлей районĕнче ачасене пулăшмалли фонда 1929 тенкĕ укçа хывнă. Унсăр пуçне 132 килограмм çăм, 189 тир, 6 мăшăр çăматă, 39 мăшăр носки, 78 мăшăр алшиш, 28 кĕпе, 122 метр пир, 10 çĕлĕк, 3 фуфайка, 5 кĕрĕк пиншак пухнă. Хăймалакассинчи комсомолецсемпе çамрăксем (ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ Яковлева юлташ) 12 килограмм çăм, кĕрĕк пиншак пухнă.

Воскресник çакна кăтартса пачĕ: комсомолăн колхозсемпе шкулсенчи тата предприятисемпе учрежденисенчи организацийĕсем куллен пуçаруллăн ĕçлесен, вĕсем фронтовиксен ачисене вăйлăн пулăшса тăма пултараççĕ. Ку ĕçе малалла та пĕр чарăнмасăр туса пырас пулать.

А. ТОКАРЕВ,
ВЛКСМ Обкомĕн шкулсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Ĕç çине çиелтен пăхаççĕ

(„Ленин çулĕпе“ стена хаçачĕ пирки)

Канаш районĕнчи Кармами ялсоветĕнчи агитколлектив руководителĕ М. Петрова юлташ ВКП(б) райкомне тăратнă информацире: уборка вăхăтĕнче 8 номер стена хаçачĕ кăларнă, кашни бригадăрах боевой листоксем тухса тăнă, тесе пĕлтерет.

Çак колхозри «Ленин çулĕпе» ятлă стена хаçатне (редакторĕ Кваскова) пăхса тухнă хыççăн, кунта ĕçлекенсем хăйсен ĕçне питех те çиелтен тăваççĕ тесе каламалла. Хаçатра колхоз пурнăçĕ çинчен тĕплĕн çырнă пĕр заметка та çук. Хаçатри заметкăсене мĕнле чĕлхепе çырнине те уйăрса илме хĕн. Чăвашла çырнă пуплевсенчех «лучше», «когда», «всеже», «кроме того» текен сăмахсене кĕртсе ларнă.

Хăшпĕр чух хаçата республикăри е районри хаçатсенчи материалсемпех тултараççĕ.

— Пире кăларнă ячĕ пултăр, мĕнле пахалăхпа тухнине никам та ыйтмасть, — тет стена хаçачĕн редакторĕ Кваскова юлташ. Унăн шучĕпе кăларнă ячĕ çеç пулмалла иккен. Ытларах кăларнă шут пултăр тесе, вĕсем иккĕмĕш номертен тӳррех 8-мĕш номер тунă. Кама интересленмерме пултарĕ-ха çакăн пек тухакан стена хаçачĕ?

А. Кваскова юлташ ку ялта виçĕмĕш çул ĕнтĕ учительница пулса ĕçлет. М. Петрова юлташ тулли мар вăтам шкулти вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ. Вĕсем йĕркеллĕ те культурăллă стена хаçачĕ кăларса тăма пултарассăн туйăнать.

Çавăн пекех ку колхозра ăнлантаруллă ĕçе те кирлĕ пек йĕркелемен. Агитаторсен хисепĕ вăтăра та çитет. Анчах ĕçĕ курăнмасть. В. Ефремова, Н. Максимов, А. Тихонова агитаторсем уборка хыççăн ку ĕçе пачах сӳнтерсе лартнă.

Чапаев ячĕпе хисепленекен колхозра йĕркесĕрлĕхсем сахал мар. Хăшпĕр колхозницăсем ним сăлтавсăрах ĕçлеме ирхине 9—10 сехетре çеç тухаççĕ. Анчах стена хаçачĕ ун çинчен нимĕн те шарламасть. Çĕрулми кăларнă çĕртен М. Александрова колхозница икĕ хутчен киле çĕрулми илсе пынă. Ку ĕç пирки те шарламасăр ирттерсе янă.

Укçа-тенкĕ пухас ĕçе хăкламаççĕ

КАЛИНИНО. Кюлхĕрри ялсовечĕ укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе питех те юлса пырать. Виççĕмĕш кварталти плана вăл 73 процент ытларах çеç тултарнă.

Мĕншĕн-ха ялсовет укçа-тенкĕ пухас плана вăхăтра тултараймасть? Калас пулать, ялсоветĕнче культурăллă вăй та, актив та сахал мар. Вĕсене ĕçе явăçтарса, колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе лайăх йĕркелесе пынă пулсан, укçа-тенкĕ пухас плана срокчен тултарма пулатчĕ. Анчах кунта çавăн пек ĕçлемеççĕ. Хăшпĕр активистсем государство умĕнчи парăмсене хăйсем те вăхăтра тӳлемеççĕ. Колхоз председателĕ Журавлев юлташ ялхуçалăх налогне 600 тенкĕ тӳлесе татман. Çавăн пекех колхоз бригадирĕсем Сидоров тата Туйкин юлташсем те хăйсен парăмĕсене парса татман. Кун пек тĕслĕхсене тата та илсе кăтартма пулать. Паллах, вĕсем хăйсем кайра пыраççĕ пулсан, колхозниксем хушшинче те ĕçлеме пултараймаççĕ.

Ялсовечĕн укçа-тенкĕ пухас ĕçе халех вăйлатмалла.

Государствăна пама сӳс-кантăр вăхăтра хатĕрлер

Государствăна техникăллă культурăсем — йĕтĕн тата кантăр сӳсĕ тăратасси колхозсем умĕнче тăракан пысăк задачăсенчен пĕри пулать. Анчах та йĕтĕн-кантăра шыва хутса пултарас, тыллас ĕçсем республикăри колхозсенче çителĕксĕр пулса пыраççĕ-ха. Колхоз председателĕсем тата çĕрĕç органĕсен руководителĕсем чылайĕшĕ сӳс-кантăр хатĕрлес ĕçе тивĕçлипе хакламаççĕ. Çавăнпа та чылай çĕрте йĕтĕн-кантăра пăхса ӳстерес, пуçтарса кĕртес ĕçсенче пысăк çитменлĕхсем пулаççĕ.

Республикăра, пĕтĕмĕшпе илсен, йĕтĕн-кантăра уйхирсенчен пуçтарса кĕртнĕ ĕнтĕ. Халĕ вĕсене шыва хутса пултармалла, тата тылласа сӳс тумалла. Ку ĕçсем вара питех сӳрĕк пыраççĕ. Йĕтĕн акакан тĕп районсенче пухса кĕртнĕ йĕтĕнрен 42 процентне сарса хуман. Вăл ĕç уйрăмах Кувакино, Пăрачкав тата Улатăр районĕсенче начар пырать. Кантăра шыва хутса пултарасси те юлса пырать-ха. Октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне Елчĕк тата Вăрмар районĕсенчи колхозсем малтанхи гектарсем çинчен пуçтарса кĕнĕ кантăра кăна шыва хутнă. Чкаловски тата Тăвай районĕсенчи колхозсем çав вăхăт тĕлне кантăра шыва пачах хутман.

Государствăна сӳс-кантăр парас плана тырпулсем панипе пĕрлех тултарасси — колхозсен тивĕçĕ пулса тăрать. Çакна вăхăтра пурнăça кĕртес тесен, йĕтĕн-кантăра халех шыва хутса пултарни тата вĕсене тыллас ĕçе организацилени кирлĕ. Чăнах та, хăшпĕр районсенче йĕтĕн-кантăр хутма шывсем çителĕклĕ мар. Анчах вăл йĕтĕн-кантăра хутса пултарассине вăрăма хăваракан сăлтав пулма пултараймасть. Колхозсенче сӳс-кантăр хутма ятарласа тунă пĕвесем пулмасан, сӳс-кантăра юханшывсенче, кӳлĕсенче хутма пулать. Çавăн пек чухне вара юханшывсене хуллен юхакан вырăнсенче пĕвелес пулать. Мĕншĕн тесен хăвăрт юхакан шыва хутсан, хутнă кантăр час пулаймасть тата унăн пахалăхĕ пĕтме пултарать. Йĕтĕн-кантăр ăшăрах шывра хăвăрт пулса çитет. Çавăнпа та йĕтĕн-кантăра шыва хутас ĕçе сивĕ çанталăка хăвармалла мар.

Йĕтĕн-кантăра тылланă чухне колхозсенче пур машинăсемпе те туллин усă курмалла. Анчах та чылай колхозсенче вăл машинăсене пĕтĕмпех япăхтарса янă. Колхоз руководителĕсен вăл машинăсене халех юсаса йĕркене кĕртмелле. Техникăллă культурăсем акнă кашни колхозра йĕтĕн-кантăра тылламалли пунктсем пулмалла. Вăл пунктсенче типĕтмелли вырăнсем тумалла.

Йĕтĕн-кантăр акса тăвакан колхозсен государство умĕнчи обязательствăсене çывăх вăхăтрах пурнăça кĕртме условисем çителĕклех пур. Çине тăрса ĕçлени çеç кирлĕ.

А. ФЕДОРОВ.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВАРÇА ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Алжирти радион çакăн пек пĕлтерĕвне сарать: Англин 8-мĕш çарĕн сулахайра пыракан пайĕ, Фоджа-Рим çулĕпе çурçĕр еннелле куçса пырса, Винкьятуро хулинчен 35 километрта ларакан пункта çитнĕ. Юлашки кунсенче Америка çарĕсем Понтеландольфоран 22 километр çурçĕртерехри тусем патне çитнĕ. Германин Кейсельринг ертсе пыракан çар чаçĕсем Винкьятуро патĕнчи ансăр ту хушăкĕ патнелле чакнă.

ЛОНДОН, октябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен çарĕсем, малалла куçса пырса, Санта—Кроче, Бонефо тата Ритчча хулисене йышăнса илнĕ.

Салерно хулине союзниксен çĕнĕ вăйĕсем пырса çитнĕ.

Вольтурно шывĕн районĕнче нимĕçсем пысăк çухатусем тӳснĕ.

Каирти радио пĕлтернĕ тăрăх, Неаполь портне юсанă ĕнтĕ, союзниксен флочĕ халь унпа усă курма тытăннă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Италири тата Эгей тинĕсĕнчи çар объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

НОРВЕГИРИ КВИСЛИНГОВЕЦСЕН БАНДИ АРКАНСА ПЫНИ

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Швеци хаçат-журналĕсем Квислинг партийĕ арканнăçемĕн арканса пыни çинчен çыраççĕ. Квислинговецсем хăйсен «партийĕнчен» йышлăн тухаççĕ.

Нумаях пулмасть, çамрăк квислинговецсен ушкăнне — арçын ачасемпе хĕрачасене—Германие вĕренӳ лагерьне янă пулнă. Норвегие каялла таврăннă чухне, Швеци урлă каçнă чух, çав çамрăк квислинговецсем, Норвегие таврăнасран хăтăлас шутпа, поезд çинчен анса юлнă. Вĕсем çапла хăтланнин сăлтавĕ — вĕсем гитлерла Германия çĕнтерессе ĕненми пулни.

Норвежецсен Стокгольмри информаци бюровĕ çапла пĕлтерет: квислинговецсен виçĕ хулари организацийĕсен пĕтĕмĕшле пухăвĕсене мĕн пурĕ те 21 çын кăна пынă.

ЛОНДОН, октябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: квислинговецсен Тронхэйм хулинчи организацийĕн пуçлăхĕ Вогстад çак кунсенче сăмах тухса каланă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче «пăхăнмасăр тăракансене» юнаса хăратнă. Вогстад çапла хăратни вăл халăх квислинговецсене курайманни ӳссе пынинчен килет. Вогстад çапла каланă: «Халĕ Квислинг организацийĕн речĕсенче тăма хăрушă пулса кайрĕ. Ун пек лару-тăрăва пĕтерсе лартас пулать»,—тенĕ.

ГИТЛЕРЛА ГЕРМАНИРЕ АПАТ-ÇИМĔÇ ЙЫВĂРЛĂХĔСЕМ ӲССЕ КАЙНĂ

ЖЕНЕВА, октябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлерла хаçатсем: Германире тырă лайăх пуласса шанса тăни ахалех пулчĕ, тесе çыраççĕ. Гитлерла «гаулейтерсенчен» пĕри — Гислерăн сăмахне пичетлесе кăларнă. Гислер çапла каланă: «Пирĕн хресченсен, хресчен арăмĕсен тата ялти çамрăксен пичĕсем çинче вĕсем калама çук нумай ĕçленин паллисене курма пулать». Апла пулсан та, тенĕ Гислер, «ялхуçалăх çулталăкĕн результачĕсем нумай тĕлте çынсене пысăк хуйха ӳкерчĕç». Гитлерла хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Германире çăкăр начарланнăçемĕн начарланса пырать. Германире çĕрулми питĕ нумай çитмест, тесе асăрхаттараççĕ хаçатсем. Мĕнпур тытакан пулла бомбăсем пăрахнă хуласене кăна яраççĕ, ытти хуласене пĕртте ямаççĕ..

КĔСКЕН

● Октябрĕн 5-мĕшĕнче Лондона Кăнтăр Африка Союзĕн премьер-министрĕ фельдмаршал Смэтс çитнĕ. Вăл унта, Черчилльпе тĕл пулса, Британи доминионĕсен премьер-министрĕсене Лондона пухса канашлу туса ирттерес ыйтăва сӳтсе явать.

● Югослави хулисен урамĕсем тăрăх никам пăхман ачасем пинĕ-пинĕпе сулланса çӳреççĕ. Кăçал концентрациллĕ лагерьсене çавăн пек никам пăхман 5 пин ачана тытса хупнă. Пĕр Загреб хулинче кăна 1.500 ачана яхăн тытса хупнă.

● Хĕрлĕ Çар çĕнтерӳллĕн тапăнса пынине пула, Румынире гитлеровецсем лартнă пуçлăхсем хушшинче хăрасси ӳссе пырать. Юлашки вăхăтра Румынири çар влаçĕсен темиçе чрезвычайнăй канашлăвĕ пулса иртнĕ. Çĕршывра çынсене питĕ нумай арестлеççĕ. Полици Антонеску правительствине сирпĕтсе ярас тесе ĕçлекен организаци йĕрлесе тупнă.

● Диверсисем туса, Копенгаген хулинче нимĕçсен авиаци мастерскойĕсемпе ангарĕсене вăйлă сиенленĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23

НТ 1139 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 84 п. л